*Шупашкарти мĕш шкул ачисен хаçачĕ*

# ШĂНКĂРАВ

**№8, 2025, кăрлач уйăхĕ**

## Ку кăларăмра:

1. Шупашкар хули 555 çул тултарнă тĕлне 47-мĕш шкулта çĕнĕ спорт уçлăхĕ уçăлчĕ. Шкул директорĕн - Кириллова Р.И. саламĕ.
2. Шупашкар хули 555 çулта.
3. 2024-мĕш çул - Раççейре Çемье çулталăкĕ. Çемье-тăнăçлăх вучахĕ.
4. Чăваш чĕлхи - тăван чĕлхе. Çеçпĕл Мишши 125 çулта.
5. Шкул пурнăçĕнчен. Асра юлнă самантсем…




Хыçа юлать ак тепĕр çул
Ăсатнă май ăна ал сул.
Пулни-иртни унпа пĕрле
Юлать хăш чух аса илме.
Каять хăй çулĕпе кив çул,
Кунта юлма тек майĕ çук.
Çĕн çул баскать яланхилле,
Пĕлет вăл хăйĕн черетне.
Апла, килсем, килсем, Çĕн Çул!
Пирĕнпелех ĕнтĕ эсĕ юл.
Уçса кĕрсем çĕн алăкне,
Илсе килсем пур ыррине.
Иртсем тĕпелерех, Çĕн Çул,
Хăюллăрах халь эсĕ пул.
Çитсем те эс кашни киле
Валеç пурне те телейне!




Хаклă ĕçтешсемпе юлташсем!

Сире çывхарса килекен Çĕнĕ 2025 çул ячĕпе ăшшăн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, вĕçĕ - хĕррисĕр телей, юратупа килĕшӳ сунатпăр. Пурнăç çулĕ такăр та вăрăм пултăр, пултарулăх çăлкуçĕ иксĕлми хăватпа тапса тăтăр! Çывхарса килекен Çĕнĕ çулпа, туссем!

***Редактортан***

# ÇĔНĔ ВĔРЕНӰ ÇУЛĔ ТĔЛНЕ СПОРТ УÇЛĂХĔ УÇĂЛЧĔ.

## Çĕнĕ вĕренӳ тĕлне спорт уçлăхĕ уçăлчĕ.



Часах çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланать, ачасем каллех юратнă шкулсене килеççĕ, пĕр класра вĕренекен ачасемпе тĕл пулаççĕ. Ачасене вĕренмелли условисене лайăхлатма, вĕсен пултарулăхне аталантарма Шупашкар хули 555 çул тултарнă май тĕп хулара нумай шкулта хăтлăх кĕртес енĕпе тĕрлĕ ĕçсем йĕркеленĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ умĕн 47-мĕш вăтам шкул вĕренекенĕсемшĕн те савăнмалли пысăк сăлтав пулчĕ. Кунта августăн 17-мĕшĕнче çĕнĕ спорт уçлăхĕ уçăлчĕ.

Спорт обьектне савăнăçлă лару-тăрура уçма Чăваш Республикин пуçлăхĕ Олег Николаев, РФ Патшалăх Думин депутачĕ Алла Салаева, Чăваш Республикин вĕренӳ министрĕ Дмитрий Захаров, Шупашкар хулин пуçлăхĕ Владимир Доброхотов тата нумай хăна хутшăнчĕ.

47-мĕш вăтам шкулта ĕçлекенсем хисеплĕ хăнасене тарават кĕтсе илчĕç. Малтанах шкул директорĕ Римма Ивановна Кириллова хăнасене пĕлӳ учрежденин ĕçĕ-хĕлĕпе, çĕнĕ вĕренӳ çулĕн малашнехи планĕсемпе паллаштарчĕ. Тăван халăх йăли-йĕркине упраса хăварас тесе нумай ĕçлени куç кĕретех: шкулта «Чăваш музейĕ» ĕçлет, пĕрремĕш хутра «Чăваш Ен мăнаçлăхĕ - сăнсенче» рекреаци йĕркеленĕ. Мухтавлă ентешсене сăнран палламалла, вĕсем республика аталанăвне мĕнле тӳпе хывнине асра тытмалла. Çак шухăша аслă класра вĕренекенсем пурнăçа кĕртес тенĕ. Вĕренӳ учрежденийĕнчи пĕр стена энциклопеди евĕрех халĕ. Унта сахал мар тĕлĕнмелле истори пуçтарăннă.

Çитĕнекен ăрăва патриотла воспитани парасси те тĕп вырăнта. Шкулта кадетсен класĕсем йĕркеленĕ. Ачасене пур енлĕн аталанма пĕлӳ çуртĕнче тĕрлĕ майсем çителĕклĕ.

Стадионта хăнасене парадпан çапакан шкул ансамблĕ кĕтсе илчĕ. Унтан хăнасем воркаут-площадка, футболла вылямалли уй, скейт, тренажерлă площадка витĕр тухрĕç. Шкул Арбатĕнче хăнасем ачасен «Телей хули» ӳкерчĕкĕсен куравĕ, «Пĕрле ӳкеретпĕр» пултарулăх мастерскойĕ, «Наци тĕрри» выставки тата робототехника куравĕпе паллашрĕç. 9-мĕш класра вĕренекен Семен Алексеев скрипкăпа выляса чăваш кĕввипе савăнтарчĕ.

Малаллахи уявра Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев вĕрентекенсемпе вĕренекенсене тата вĕсен ашшĕ-амăшĕсене саламларĕ: «Пирĕн хула хăйĕн юбилей çулне пысăк улшăнусемпе, çитĕнӳсемпе кĕтсе илет. Эпир ачасене пур енлĕн аталанма, лайăх пĕлӳсем илме, пултарулăхпа спорта аталантарма май паракан уçăмлă та ăнланмалла стандартсем туса хатĕрлерĕмĕр. 2022 çулта çĕршыв Президенчĕ Владимир Владимирович Путин шкул системине çĕнетмелли федераци программине хута янă. Шкулсенче территорисене хăтлăх кĕртмелли проекта вĕренекенсемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсен шухăш-кăмăлне шута илсе туса хатĕрленĕ. Пулас ăру валли лайăх условисем йĕркелес тесе эпир тĕрлĕ ĕçсем иртетерме тăрăшатпăр. Çамрăк спортсменсем валли шкул территорийĕнче чи хătлă площадкăсем уçатпăр. Çак модернизацие пула пирĕн ачасем пур сферăра та çĕнĕ çитĕнӳсем тăваса шанатăп. Пирĕн хула лайăхлантăр, йĕркеленнĕ йăласене упратăр»!

Шупашкар хулин пуçлăхĕ Владимир Доброхотов пурне те çĕнĕ спорт обьекчĕсем уçнă ятпа саламларĕ, шкул дирекорне Римма Ивановна Кирилловăна Шупашкар хулин ырлăхĕшĕн тăрăшнăшăн, тӳрĕ кăмăлпа чунне парса ĕçленĕшĕн «Шупашкар хули 555 çул» тĕлне хатĕрленĕ медале парса чысларĕ.

«Шупашкар хули 555 çул çитнине уявланă май шкул территорийĕнче модернизаци иртерне. Педагогика коллективĕн, ашшĕ-амăшĕн тата вĕренекенсен ячĕпе шкул çумĕнчи территорисене çĕнетмелли программăна пурнăçлама пулăшнăшăн пысăк тав сăмахĕ калатăп. Икĕ уйăх хушшинче шкул пĕтĕмпех улшăнчĕ. Вĕрентме, ачасене вĕренме, хăйсен пултарулăхне кăтартма, ачасен сывлăхне çирĕплетме тата физкультура урокĕсем иртерме хăтлă майсем йĕркелени, çакăн пек чаплă вĕренӳ уçлăхĕ йĕркелени çав тери пысăк çитĕнӳ! Малашне те юратнă хулашăн, Чăваш Республикишĕн тата хамăрăн çĕршыв ырлăхĕшĕн тăрăшса ĕçлессе, спортри çитĕнӳсем татах та сумлăрах пуласса шанас килет. Çакăн пек нумай функциллĕ шкул стадионĕ сывă пурнăç йĕркине тытса пыма пулăшĕ», - палăртса хăварчĕ Римма Кириллова.

Программăпа килĕшӳллĕн уяв ачасен савăнăçлă концерчĕпе вĕçленчĕ. Концерт итлекенсен чĕрисенче ырă асаилӳсем хăварчĕ.

***О.В.Головина, И.В. Власова***
***чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсем***

# ШУПАШКАР ХУЛИ 555 ÇУЛТА.




## Ман Шупашкар

Эп юрататăп сана, ман Шупашкарăм,
Ытарайми илемлĕ шур хула!
Ăçта кайсан та сан патах васкарăм,
Санпа эп çыхрăм пĕтĕм кунçула.

Кунта вĕрентĕм эп, ӳссе çын пултăм.
Кунтах пĕрлешрĕм савнă тусăмпа.
Ĕмĕрлĕхе телей кунта эп тупрăм.
Эп мухтанап, тăван хулам, санпа!

Куллен ӳссе, капăрлансах пыратăн,
Мăн Атăл сăрт-туне илем парса.
Эс радио та теле-хум яратăн,
Çĕршывĕпех саран пирĕн сасса.

Авал санран тăрăхласа тек кулнă:
«Чăпта хули, Чăваш-Париж», тесе.
Кив сăнару сан музейра çеç юлнă,
Заводсемпе ларан халь кĕрлесе.

Урамусен ик енĕпе çĕкленнĕ
Пуç çаврăнмаллăх çӳллĕ керменсем.
Чи чаплă площадьрен юратнă Ленин
Утать пĕр ывăнми пире ертсе.

Вăл хушнă пек, чуна парса ĕçлетпĕр,
Çĕклетпĕр тĕп хуламăрăн чапне.
Ильичпала пĕрле эпир çитетпĕр!

***Порфирий Афанасьев***

## Шупашкарăм, юратнă хула

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Илемлĕ вырăнсем нумай.
Эс тăван кил ман, Шупашкарăм,
Туятăп ăшшуна пĕрмай.

Çулсеренех çуртсем ӳсеççĕ,
Таса та çутă урамсем.
Сан пек хитри, çуках пуль, теççĕ.
Ялан килсе çӳрекенсем.

Ыр кăмăллăх кунта илентĕр
Хĕвел пек тăтăр ăшăтса.
Чăваш ятне хулам çĕклетĕр
Пур халăх тăтăр мухтаса.

***Нина Пăрчăкан.***



# ÇЕМЬЕ - ТĂНĂÇЛĂХ ВУЧАХĚ

*Туслă çемье- çĕршыв тĕрекĕ.*
*И.Я.Яковлев*



## Манăн туслă çемье.

Эпĕ Ирина ятлă. Эпир çемьере тăваттăн: атте, анне, эпĕ тата йăмăк. Манăн йăмăк Кира ятлă. Вăл кăçал пĕрремĕш класа кайрĕ. Эпĕ вунпĕр çулта, пиллĕкмĕш класра вĕренетĕп. Пире шкулта пĕлӳ пухма питĕ килĕшет. Пушă вăхăтра йăмăкпа иксĕмĕр ташлама, юрлама, ӳкерме юрататпăр.

Анне, Татьяна Алексеевна, шкулта ĕçлет. Вăл ачасене математика вĕрентет. Пирĕн анне тĕрлĕ апат хатĕрлеме ăста. Час-часах пире тата хăнасене тутлă апат - çимĕçпе сăйлать. Анне ырă кăмăллă та ĕçчен. Манăн та ун пек пулма тăрăшасчĕ.

Атте Владимир Николаевич, чăн-чăн ылтăн аллăллă. Вăл тем те тума, ăсталама, юсама пĕлет.

Пирĕн çемье питĕ туслă. Эпир пушă вăхăта пĕрле ирттерме тăрăшатпăр.

Кашни çул январĕн пĕрремĕшĕнче юратнă асаннене Валентина Геннадьевнăна Çĕнĕ çул ячĕпе саламлама яла каятпăр. Уява çемьепе пĕрле кĕтсе илетпĕр.

Çуркунне тата çулла эпир яла çӳретпĕр. Уçă сывлăшра канатпăр, вылятпăр, хĕвелпе хĕртĕнетпĕр. Пахчара та ĕçлетпĕр: çум çумлатпăр, йăрансене кăпкалататпăр, шăваратпăр. Унта эпир тĕрлĕ чечек, пахча - çимĕс пăхса ӳстеретпĕр.

Çулла, каникул вăхăтĕнче, çăмăл машинăпа тĕрлĕ вырăна тухса çӳреме килĕшет пире. Атте таçта та илсе çитерет! Пĕрле пире питĕ аван!

***Ирина Хрусталева, 5-мĕш класра вĕренекен***

- ✓ ***Аçунтан хăра, аннӳне хисепле.***
- ✓ ***Ашшĕ лайăх пулсан, ачи маттур пулать.***
- ✓ ***Лайăх çемьере, лайăх ачасем.***

## Ĕç çынна илем кӳрет.

Çĕр çинче професси нумай: учитель, повар, тухтăр, çĕвĕçĕ тата ытти те. Кашни професси хăйне евĕр интереслĕ. Тухтăр çынсене сыватать, повар апат пĕçерет, çĕвĕçĕ вара хитре кĕпе тум-тир çĕлет. Профессие кашни çын хăйĕн пултарулăхне кура суйласа илет.

Манăн пĕрремĕш вĕрентекен - Федорова Людмила Федоровна. Шăпах вăл мана пуçласа саспаллисемпе паллаштарчĕ: вулама, хут çине шăрçа пек хитре çырма, шутлама вĕрентрĕ.

Людмила Федоровна- чăн-чăн вĕрентекен, хăйĕн чунне парса ачасене ăс парать, вĕсен малашлăхĕшĕн тăрăшать. Класри ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе те ĕçлет. Вĕсемпе тачă çыхăну тытать, воспитани енĕпе кирлĕ канаш-сĕнӳсем парать.

Халĕ эпир улттăмĕш класра, пире тĕрлĕ учитель вĕрентет. Вырăс, чăваш, акăлчан чĕлхисене, истори, математика тата ытти предметсене те вĕренетпĕр. Учитель кашни çын пурнăçĕнче тарăн йĕр хăварать. Хăйĕн предметне лайăх пĕлекен педагог çеç ачасене тарăн пĕлӳ пама пултарать.

Манăн анне, Тимофеева Наталья Николаевна, шкулта нумай çул хушши математика вĕрентет. Унăн вĕренекенĕсем олимпиадăсене, тĕрлĕ конкурссене хутшăнаççĕ. Уроксем ирттерсе пĕтерсен те ахаль лармасть вăл. Шкулти мероприятисене йĕркелет, ачасене тĕрлĕ конкурссене хутшăнтарать, вĕсемпе экскурсисене çӳрет. Ачасене тĕрĕс пурнăç çулне суйлама вĕрентет, çавăнпа ачасем аннене юратаççĕ, хисеплеççĕ.



Аннен профессийĕ мана питĕ килĕшет. Учитель ĕçĕ питĕ интереслĕ, пысăк тавракурăмлă, çавăнпа та унăн ĕçре сăпайлă та чăтăмлă пулмалла.

«Çĕре хĕвел илем кӳрет, çынна - ĕç», - тесе ахальтен каламан ваттисем. Эпĕ аннен ĕçне малалла тăсасшăн. Çавăнпа та халь шкулта лайăх вĕренме тăрăшатăп.

***Мария Тимофеева, 6-мĕш класра вĕренекен***

# ÇЕМЬЕ - ТĂНĂÇЛĂХ ВУЧАХĔ

## Анне.

Тав тăватăп аннене –
Вăл çуратнă-çке пире.
Юрататăп куллине.
Вăл – асамлă та хитре.
Тавтапуç сана, анне,
Мана пăхса ўстернишĕн.
Савнăç килчĕ чĕрене
Эсĕ ман анне пулнишĕн.

***Кирилл Муравьев,***
***5-мĕш класра вĕренекен***

## Манăн анне.

Манăн анне питĕ ырă.
Куçĕ хăмăр, çўçĕ çырă.
Мана ăшшăн çупăрлать,
Хăйĕн çумне чăмăртать.

Унпа лайăх калаçма,
Пĕрле çырма, вулама.
Сăвă çырма вĕрентет,
Лайăх пулсан хĕпĕртет.

***Лидия Курицына,***
***1-мĕш класра вĕренекен***




## Анне - пĕртен - пĕрре

Эпĕ хамăн аннене
Питĕ юрататăп.
Сăввăмри йĕркесене
Ăна халлалатăп.
Манăн вăл- чи илемли,
Чунăма лăпкать сасси.
Суйламаççĕ аннене
Ма тесессĕн вăл - пĕрре.
Ман анне пĕртен-пĕрре.
Чи çепĕççи тĕнчере.
Ăшăтнишĕн чĕрене
Тавтапуç сана, анне.

***Карина Васильева,***
***7-мĕш класра вĕренекен***

## 2-мĕш Л класра вĕренекен ачасен пултарулăхĕ
**(класс ертўçи Л.Ф. Федорова)**









## Пĕлме интереслĕ

Ĕлĕк кил тата çемье çинчен хисеплесе калаçнă. Çемьесем пысăк та туслă пулнă. Пурнăç йывăр пулсан та çемьере хаваслăх хуçаланнă. Ваттисене хисепленĕ, çамрăксене сыхласа пурăннă. Сирĕн кашнин тăвансем нумай (асанне, асатте, кукамай, кукаçи, тете, пичче, аппа т.ыт.те) Эпир вĕсемпе тачă çыхăннă. Нумайăшĕ пирĕнтен çемье йывăçне (Древо Семьи) ўкернĕ. Йывăçа тепĕр майлă çавăрсан тымарсем пулаççĕ. Эпир вĕсенчен тухнă. Çирĕп çемье пирки унăн тымарĕсем çирĕп теççĕ.

Пирĕн аннесем, çемьере икĕ ача пулсан, çулталăк хушшинче 18000 çĕçĕ, вилка, кашăк 13000 турилкке, 8000 чашăк çăваççĕ. Çав чашăк-тирĕк йывăрăшĕ-5 тонна. Лавккана апат- çимĕç туянма утнă çул тăршшĕ - 2000 çухрăма танлашать. Паллах, эпир аннесене пулăшсан, çак хисепе пĕчĕклетме пулть.

Авал Китайра тĕлĕнмелле çемье пурăннă. Ку çемьере 100 çын пулнă. Унта ăнлану, юрату хуçаланнă. Имератор та ку çемье çинчен илтнĕ. Вăл ку çемьене çитсе курнă. Çемье çинчен сăмах тĕрĕссине ăнланнă та чи ватă çынран ыйтнă: „Эсир мĕнле пĕр- пĕринпе килĕштерсе пурăнма пултаратăр? Пĕр-пĕринпе ятлаçмастăр, кўрентерместĕр?» Хуравĕ вара пĕр сăмах кăна пулнă. Мĕнле? Çак сăмаха тупмалла (ЧĂТĂМЛĂХ)

Хăвăра яланах типтерлĕ, хитре тытма тăрăшăр. Çемьере пĕрне-пĕри ан кўрентерĕр. Хăш чух хытăрах каланă сăмах та чĕрене тивет.

***А.Г.Петрова хатĕрленĕ***

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИ - ТĂВАН ЧĔЛХЕ.

## Чăваш ачине

Пĕлтер мана, тăван çĕршывăм:
Хăçан кăтартăн халăхна
Ху чĕлхӳне хăват кĕртмешкĕн
Тĕнчене килнĕ ывăлна?
Кăвар чĕре! Кăвар чĕлхеллĕ
Чăваш ачи, сассуна пар!
Тухсам кунта. Сана кĕтеççĕ.
Килсем! Килсем!
Эс пур, - çук мар.
Часрах килсе хăватлăх кĕртчĕ
Чăвашăн капăр чĕлхине.
Çунтартăр çулăмлă, кăварлă
Чĕлхӳ çынсен чĕрисене.
Ĕмĕрлĕхе яту сан юлĕ.
Шупашкартан Кавал таран,
Çĕрпӳ, Чикме, Етĕрне урлă
Юрру сассийĕ кайĕ сан.
Чăваш чĕлхи ăсти! Кăварлă
Чĕрӳ сан сисĕ чĕннине.
Шанатăп. Ĕмĕте усратăп:
Эс килĕн. Килĕн тĕнчене!

## ÇЕÇПĔЛ МИШШИ ÇУРАЛНĂРАНПА 125 ÇУЛ.




ÇЕÇПĔЛ - юр кайсанах шăтса тухакан çурхи пĕрремĕш чечек. Унсăр пуçне Канаш районĕнче çавăн ятлă ял та пур. Шăпах çак илемлĕ ята псевдоним выранне йышăннă чăвашсен паллă поэчĕ, драматургĕ, прозаикĕ Çеçпĕл Мишши. Михаил Кузьмич Кузьмин, 1899 çулта Канаш районĕнчи Çеçпĕл ялĕнче кун çути курнă, çуралнăранпа кăçалхи ноябрь уйăхĕнче 125 çул çитет. Çĕр çинчи пурнăçĕ çав тери кĕске (23 çул çеç пурăннă) пулсан та вăл литература каçалăкĕнче тарăн йĕр хăварнă.

## ЧĂВАШ ТĔРРИ- ХАЛĂХ ПУЯНЛĂХĔ



Чăваш тĕрри çырулла теççĕ.
Мĕн çырнă-ши вара унта?
Чăваш тĕрри асамлă теççĕ.
Асамĕ пур-тăр çав, чăн та!

Мĕнле хитре чăваш тĕрри,
Ун курăнмастъ вĕçĕ-хĕрри.
Унта асамлă çăлкуçсем,
Илемлĕ çутă çăлтăрсем.

***Василий Давыдов-Анатри***



## Чăваш тĕррин кунĕ ячĕпе чунтан саламлатпăр.

Чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕнче чăваш тĕррин кунне уявлаççĕ. Чăваш тĕрри вăл - асамлă та илĕртӳллĕ, паха та мухтавлă. Чăваш тĕрринче тăван халăхăмăрăн тĕрлĕ енлĕ историйĕ тата ăсталăхĕ палăрать. Тĕрĕ – пурнăç хăйне евĕрлĕхĕ те, çут çанталăк илемĕ те, тĕкĕрĕ те. Вăл ăс-тăн кăмăл-туйăмне те, ĕмĕт-тĕллевсене сăнлать. Çак илеме тумашкăн чăваш халăхĕ мĕн ĕлĕкрен пĕлнĕ. Чăваш тĕррине пĕтĕм тĕнчипех пĕлеççĕ, выставкăсенче малти вырăна та хураççĕ. Тĕррĕн пĕлтерĕшĕ çыннăн пурнăçĕнче питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн мăн асаттесемпе асаннесен йăлине сыхласа, упраса хăвармалла.

Ĕмĕрсем иртеççĕ пулсан та чăваш тĕррин илемлĕхĕ пире паянхи кун та илĕртет. Чăваш шупăрĕ, кĕпе умĕ, сурпан, хĕр пĕркенчĕкĕ, арçын кĕпи, çанă, кĕрӳ тутри - чăваш тĕрри çав тери анлă та пуян.

# ШКУЛ ПУРНĂÇĔНЧЕН… САЛАМЛАТПĂР!






Чӳк уйăхĕнче шкулта президента суйларĕç. Сак суйлава вĕрентекенсемпе вĕренекенсем хутшăнчĕç. Пĕр шухăшлă пулса 10-мĕш класра вĕренекен Гаврилова А. шкул президенчĕ пулса тăчĕ.

Чук уйăхĕнче Шупашкар хулинче 5-9- мĕш класра вĕренекенсен хушшинче «Манăн çемье-манăн пуянлăх» темăпа сăвăсен конкурсĕ иртрĕ. Муниципалитет тапхăрĕн çĕнтерӳçисемпе призерĕсене саламлатпăр:

**Белова Ю -1 мĕш вырăн**

Вĕрентекенĕ: Власова И.В.

**Смолькова В- 2 мĕш вырăн**

Вĕрентекенĕ: Федорова Л.Ф.

**Капустина А- 3 мĕш вырăн**

Вĕрентекенĕ: Романова Е.Н.







Чăваш чĕлхине малалла аталантарас, халăх хушшинче сарас, пултаруллă шкул ачисене тупса палăртас, ачасен пултарулăхне аталантарма вĕсен ашшĕ-амăшне анлăрах явăçтарас тĕллевпе Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ тата Чăваш наци конгресĕ юпа уйăхĕн 21-мĕшĕнче «Реклама тĕнчи» конкурсирттерчĕ. Конкурс çӳллĕ шайра иртрĕ.

Конкурса пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕренеӳ организацийĕсен 7-11 класĕсенче, аслă вĕренӳ заведенийĕсемпе професси вĕренĕвĕн организацийĕсенче вĕренекенсем хутшăнчĕç.

Вĕренекенсем «Чи лайăх буклет», «Чи лайăх афиша», «Чи лайăх буктрейлер», «Чи лайăх социаллă реклама», «Чи лайăх коммерци реклами», «Чи лайăх видеоролик» номинацисенче тупăшрĕç.

6-мĕш класра вĕренекен Милена Сюзюкина «Чи лайăх социаллă реклама» номинацире «Пластик ытла вăрах пурăнать» темăпа тухса каласса виççĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Вăл пластик кĕленчи экологие мĕнле сиен кӳни çинчен, ăна çырмана, юхан шывсене пăрахмалла марри çинчен каласа кăтартрĕ. «Çут çанталăка варалар мар, ăна упрар», - тесе палăртса хăварчĕ Милена Сюзюкина.

Миленăна тата ăна ертсе пыраканне Головина О.В. конкурсра çĕнтернĕ ятпа чунтан саламлатпăр, малашне те çитĕнӳсем тума сунатпăр!

Шкул ачисене тата педагогсене Раççей Федерацийĕн сумлă академикĕн Геннадий Никандрович Волковăн ĕçĕ-хĕлне тĕплĕнрех пĕлме хавхалантарас, шкул ачисен чăваш халăхĕн паллă çыннисем çинчен пĕлес туртăмне тата шырав меслечĕпе ăсталăхне ӳстерме пулăшас тĕллевпе Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ «Хавхалану» пултарулăх фестивалĕ ирттерчĕ."

Г.Н. Волков хайлавĕсен чи лайăх иллюстрацийĕ" номинацире тăххăрмĕш класс вĕренекенĕ Осипова Анастасия çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ, хатĕрлекенĕ О.В.Головина. Маттур, Настя! Малашне те пысăк çитĕнӳсем тума сунатпăр.



# АСРА ЮЛНĂ САМАНТСЕМ…















# АСРА ЮЛНĂ САМАНТСЕМ…


















Редактор: Власова И.В.
Верстка тата дизайн: Селиванова Т.Н.,Власова И.В., Петрова А.Г., Головина О.В.
Редакци адресĕ: 428000, Шупашкар, Кăкшăм урамĕ, 23 çурт, 47-мĕш шкул, 102 каб.